**Петĕр Хусанкай**

**(Çуралнăранпа 50 çул çитнĕ тĕле)**

Петĕр Хусанкай - чăваш халăхĕн хальхи паллă поэчĕсенчен пĕри, нумай-нумай сăвă-юрăсен, поэмăсен, статьясен авторĕ. Унăн произведенийĕсене чăваш ĕç çыннисем лайăх пĕлеççĕ, юратса вулаççĕ, юррисене уявсенче, ĕçкĕ-çикĕсенче юрлаççĕ.

Петр Петрович Хусанкай 1907 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче Тутар республикинче, Юхмалчă районне кĕрекен Сиктĕрме ялĕнче çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕ-амăшĕ чухăн пулнă. Выçлăх çул ашшĕ вилнĕ. Ку вăхăта аса илсе, поэт çапла çырать: «Лашасăр та, хуçасăр та тăрса юлнăскерсем - аннепе эпир ят çĕрне те акайми пултăмăр: çурмалла актара пуçларăмăр. Хуçалăх тени колхоз самани пуçланиччченех ура çине тăраймарĕ».

Ялти шкултан вĕренсе тухсан, 1923 çулта Хусанкай Хусанти чăваш педагогикă техникумне вĕренме кĕнĕ. Вăл, пĕчĕклех литературă ĕçне юратса пурăннăскер, вун иккĕрех сăвăсем çырма тытăннăскер, техникумра илемлĕ литературăпа тĕплĕрех паллашать, хăйĕн пĕлĕвĕсене ӳстерет, литературă журналĕ кăларас ĕçе пысăк хаваслăхпа хутшăнать. 1924 çулта çамрăк поэтăн малтанхи сăввисем «Сунтал» журналта пичетленсе тухаççĕ.

1927 çулта П. П. Хусанкай Хусанти Хĕвелтухăç педагогикă институтне кĕрет. Унта 1931 çулччен вĕренет. Институтра чăваш чĕлхине вĕрентекенсенчен пĕри Н. И. Ашмарин профессор пулнă. Чаплă профессор чăваш студенчĕсене тăван чĕлхене ăнланма пулăшнă, чĕлхе пуянлăхĕпе паллаштарнă, чăваш сăвви-юрри виçисем мĕнлерех пулса пырассине каласа панă. Н. И. Ашмарин лекцийĕсем поэта калама çук пысăк усă панă, унăн ăс-пуçне пуянлатнă, чунне хавхалантарнă.

1931 çулта Хусанкай Мускава куçать, «Коммунар» чăваш хаçачĕн вырăнсене тухса çӳрекен корреспонденчĕ пулса ĕçлет. Хаçат корреспонденчĕ пулни поэта рабочисен, колхозниксен пурнăçĕпе, йăлисемпе лайăхрах паллашма май парать: вăл Горький хулинчи, Магнитогорскри, Донбасри терлĕ фабрикăсенче, заводсенче пулать, шахтерсен пурнăçне сăнать; инçетри чăваш ялĕсене çитсе курать, колхозсем чăмăртанни, колхозсем тавра клас кĕрешĕвĕ çивĕчленсе пыни поэт куçĕ умĕнче пулса иртет.

1941 - 1945 çулсенче Хусанкай вăрçăра пулнă. Тĕнчене, пуринчен ытла пирĕн Тăван çĕршыва, пысăк сиен кӳнĕ вăрçă поэта амантнă та туя тыттарса хăварнă.

П. Хусанкайăн чăваш литературинчи пысăк тава тивĕçлĕ ĕçĕсене шута илсе, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ ăна 1950 çулта чăваш халăх поэчĕн ятне панă. П. П. Хусанкая Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне, республикăри Мир комитечĕн президиум членне суйланă.

П. Хусанкай сăвăсем çырма пĕчĕклех тытăннă. «Тăван чĕлхен вăйĕпе илемне чи малтан мана «Нарспи» туйтарчĕ», тет вăл. «Нарспи» пулас поэтăн çырас кăмалне аталантарнă, çунат панă: чăваш чĕлхипе ĕлĕкех çавăн пек хăватлă произведени çырма май пулнă пулсан, халĕ мĕншĕн ĕç тухмĕ тесе хăраса тăрас, мĕншĕн çырас мар... Çамрăк поэт, çĕнĕ самана çынни, литература ĕçне хăюллăн тытăннă.

П. Хусанкайăн чи малтан пичетленнĕ сăвви «Ирĕк тимĕрçе» ятлă (1924). Çак кăштах абстрактлăрах, анчах çирĕп шухăшлă, илемлĕ сăвă пролетарилле революци панă ирĕке, ĕç вăйне мухтать:

Вăйлă кăкăрам
Çăмăллăн сывлать.
Хăнăхнă аллăм

Пĕрмаях шаккать;
Шаккать те ватать
Асап сăнчăрне,
Çĕнĕрен хывать
Тĕнче никĕсне.
Çӳлерех çĕклен
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

Поэт çулĕ, ĕçĕ-хĕлĕ лайăх пуçланнă, вăйлă шухăшпа, ĕмĕтпе никĕсленнĕ, чун хавалĕ çĕнтерӳ юррипе çĕкленсе пынă. Ку юрра çырнăранпа 30 çул ытла иртрĕ. Çак тапхăр хушшинче пирĕн çĕршыв улăпла утăмсемпе малалла кайрĕ, тĕпренех çĕнелсе улшăнчĕ. Совет çыннисем хăйсем те нумай-нумай улшăнчĕç: кăкăр ĕмекен ачасем çитĕнсе çитрĕç, тĕрлĕ çĕрте ĕçлекен пулчĕç, 1941 çулта пăшал тытса вăрçа кайрĕç, тăшмана çĕнтерсе таврăнчĕç... Халĕ мирлĕ ĕçре пысăк хаваслăхпа ĕçлеççĕ. Поэтăн малтанхи юрри пачах та кивелмерĕ, ун çине кирĕк пĕрчи лармарĕ.

П. Хусанкайăн пуçламăш тапхăрта, 1924 - 30 çулсенче, çырнă произведенийĕсем çак поэтăн таланчĕ пысăккине кăтартса пачĕç. Паллах, унăн çавăн чухне çителĕклĕ таран пĕлӳ те, опыт та пулман, çавăнпа вăл тĕрлĕ поэтсенчен вĕренсе пыма тăрăшнă, хăш-пĕр чухне йăнăшсем те тунă, çапах та поэтăн хăйĕн сăн-сăпачĕ, хăйне çеç тивĕçлĕ çемĕсемпе кĕвĕсем вăйлансах пынă. Çапла вара поэтăн сасси те, вăйĕ те тĕрекленнĕ, майĕпен, анчах шанчăклăн тĕрекленнĕ, пултарулăх сăн-сăпачĕ уçăлса пынă, палăрса çитнĕ.

Константин Ивановпа Тайăр Тимкки пултарулăхне 1905 - 1907 çулсенчи революци вăй-хăват парса çĕклентернĕ пулсан, чăваш совет

поэчĕсене 1917 çулхи пролетарилле революцишĕн, совет йĕркине тĕреклетессишĕн, социализм çĕнтерĕвĕшĕн пынă аслă кĕрешӳ паттăр вăйпа хавхалантарнă. Çавăн пек поэтсенчен пĕри шăпах Хусанкай пулса тăрать. Унăн произведенийĕнче революци хăвачĕпе, строительствă пафосĕпе çĕкленнĕ шухăш-кăмăл палăрать, поэт пултарулăхне обществăпа халăх пурнăçĕпе çыхăнтарать. Поэт çулĕ такăрах пулман, çапах та, тумхахсем урлă пулин те, малаллах илсе пынă. Тумхахсем хăш чухне поэтăн урине кăна мар, чунне те ыраттарнă, тепĕр чухне сассине те урмăштарнă, çапах вăл юрлама пăрахман... Халăх вăйĕ, халăх сасси унăн сассине уçса пынă, янравлăх, тĕреклĕх панă. Чăнах та, кам халăх çине шанать, вăл йăнăшмасть; кам халăхпа пĕрле, вăл вăйлă, кам халăхран вĕренет, вăл ăслă, - ку шухăшăн тĕрĕслĕхне вырăс литературин историйĕ те, чăваш литературин кун-çулĕ те лайăх çирĕплетсе парать.

П. Хусанкайăн малтанхи тапхăрта çырнă поризведенийĕсенчен чи палли «Çирĕм улттă» поэмă (1927). Ку поэмăра поэт Баку комиссарĕнчен, çирĕм ултă революционерăн паттăрлăхне кăтартса панă. Унта Шаумян, Азизбеков, Джапаридзе тата ытти коммунистсен пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ, паттăр кĕрешĕвĕ, вĕсем тăван çĕршыва, халăха, партие чун-чĕререн парăнни курăнать. Коммунист-комиссарсене Англи палачĕсем персе вĕлернĕ. Вĕсем ĕнтĕ çук. Анчах большевик-комиссарсене ĕç çыннисем манмаççĕ, вĕсен çутă сăна-рĕсене чĕрере усраççĕ. Чăваш ĕç çыннисем те, «Çирĕм улттă» поэмăна вуласа, поэт сăмахĕсемпе хăйсен патриотла кăмăлĕсене палăртаççĕ:

Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă герой - сахал мар.
Вĕсен ячĕ пуриншĕн те ылтăн,
Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,

Çирĕм ултă чăн-чăн коммунар.

Поэмă теми, тĕрĕссипе каласан, «Ирĕк тимĕрçе» юрăри шухăшсенех сарлакантарах, конкретлăрах каласа парать: вĕсем - ирĕклĕх, патриотизм, паттăрлăх, кĕрешӳ. Баску комиссарĕсем хаяр кĕрешӳре ӳссе çитĕннĕ, тĕрекленнĕ, вĕсем мĕн виличченех пролетарилле революци ĕçĕшĕн, Совет влаçĕшĕн харсăр кĕрешнĕ.

«Çирĕм улттă» поэмăра Англи колонизаторĕсен Кавказпа Вăтам Азири политикине тăрă шыв çине кăларнă, вĕсен агенчĕсен - буржуалла националистсемпе эсерсен тата ытти йăх-яхсен - ирсĕр ĕсĕсене питленĕ.

П. Хусанкай пултарулăхĕ Тăван çĕршыв аталанса, чечекленсе пынă май темă тĕлĕшпе те, шухăш пуянлăхĕ енĕпе те сарăлса, тарăнланса тĕрекленсе пынă, ют шухăш витĕмĕсенчен тасалса, малалла аталаннă, пуянланнă.

Поэтăн тĕрлĕ вăхăтра çырнă праизведенийĕсем уççăнах çакна кăтартса параççĕ: вăл яланах кун-çул уттипе тан утма, çĕннине çитсе пыма, ăнланма, тĕрлĕ произведенисенче сăнласа пама тăрăшнă, вăй çитнĕ таран сăнласа панă.

Граждан вăрçи выçлăх, тĕрлĕ йывăрлăх, çитменлĕх тата ыттисем иртсе кайсан, совет халăхĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, кивĕ заводсене, фабрикăсене юсама, çĕршыва индустрилеме тытăнчĕ, çĕнĕ заводсем, шахтăсем, рудниксем, çĕнĕ чугун çулсем турĕ. Çак ĕçсен сарăмĕпе, çĕршыва малалла чĕнекен шавĕпе хаваланса, П. Хусанкай «Магнит ту» ятлă поэмă çырчĕ. Ку поэмă чаплă Урал историне кĕскен каласа панинчен пуçланса каять. Унтан вара автор совет çыннисем Урал сăнне епле хăвăрт улăштарни-не кăтартса парать. Поэмăра эпир пысăк металлурги завочĕ тунине куратпăр. Çав завода тунă çĕрте чăвашсем те ĕçлеççĕ. Сăмахран, чăваш ачи йӳçкăшман Хĕветĕрĕ, ялта ĕлĕк «Хĕвел

ансан Хĕветĕр» пек тертленсе ӳснĕскер, ĕҫлесе пăртак укҫа тупас та яла таврăнас ĕмĕтпе завода пырса кĕрет. Заводра вăл рабочисен пурнăҫĕпе, шухăш-кăмăлĕпе пурăнма тытăнать. Ҫапла вара, Хĕветĕр комсомола кĕрет, малта пыракан рабочи пулса тăрать.

«Магнит ту» поэмăра нумай-нумай рабочисен, инженерсен, техниксен, ялтан тухса промышленноҫ ĕҫне хутшăннă ҫынсен, ют ҫĕршывран «илнĕ специалистсен ĕҫне, йăлисене, ĕмĕчĕсене кăтартса панă. Поэмă ҫĕнĕ завода ĕҫе кĕртнипе, малтанхи чугун шăратса кăларнипе, социализмла ĕҫĕн ҫĕнтерĕвĕшĕн строительсем чун-чĕререн савăннипе вĕҫленет.

Поэтшăн ку темă йывăр темă пулнă. Ҫакна шута илсе, автор поэмăн пуҫламăшĕнчех хăй шикленнине, именнине каласа парать:

Эп ҫыртăм та ҫак
сарлака сăввăма
Иментĕм:
илейрĕ-ши вăл
ҫавăрса тĕп темă -
Сисĕнет-ши унта
Мĕльюнсен вăй-халĕ?

Поэт, «Магнит ту» поэмине тата ун чухне ҫырнă чылай сăввисене аса илсе, 1948 ҫулта: вĕсем «халь нумайăшĕ кивелнĕ, ҫавăнпа вĕсене эпĕ ку кĕнекене кĕртмерĕм», тесе ҫырнă (сăмах «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнеке ҫинчен пырать. Чăвашиздат, 1948 ҫ.)

Ялта коллективизаци ĕҫĕ вăйлăн пынă вăхăтра Хусанкай ял пурнăҫĕ ҫинчен «Ҫĕр йĕркелӳ» ятлă поэмă ҫырать. Анчах ку поэмă пирĕн литературăра пысăк йĕр хăрараймарĕ. Ăна автор васкарах ҫырнă, ҫавăнпа пулас ку поэмăра ялта ҫĕнни киввине ҫĕнтерсе пынине, вĕсем

хушшинчи кĕрешĕве ĕненмелле кăтартса парайман. «Çĕр йĕркелӳ» поэмăна автор пĕрре çеç пичетлесе кăларчĕ, ăна вăл урăх тӳрлетмерĕ, ун çинчен урăх шарламарĕ те.

П. Хусанкайăн, «Çĕр йĕркелӳ» поэмăсăр пуçне ял пурнăçĕ çинчен çырнă произведенисем тата та пур. Сăмахран, кунта çак сăвăсене асăнма пулать: «Ватă колхозник юрри», «Инспектор», «Сантăр - çĕлĕк çавракан». «Тантăшсем», «Элтиван пичче», «Автанран автанччен», «Çуллахи талăк», «Тури Вылта туй сикет» тата ыттисем те. Вĕсенче колхозниксен савăнăçне, ĕмĕт-шухăшне кăтартса панă. Вĕсене вуласан, пирĕн ума колхозниксен сăнĕсем тухса тăраççĕ. Акă, сăмахран, Элтиван старик санарĕ:

Çуркунне, çĕршыв типсессĕн,
Элтиван пичче вара,
Тырăсен хакне пĕлесшĕн,
Çаврăнатчĕ хир тавра.
Тем сарлакăш, пĕр йăрансăр
Ешĕл уçăм пуссипе
Вăл çӳретчĕваскамасăр,
Танлăн, çĕрĕн хуçи пек.

П. Хусанкай ял пурнăçĕ çинчен, колхозниксен тĕрлĕ ĕçĕ-хĕлĕ, ĕмĕчĕ çинчен, савăнăçĕ, тĕрлĕ уявĕ, ĕçки-çики çинчен хăйĕн ытти произведенийĕсенче те нумай çырнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи тапхăрĕнче çырнă произведенисенчен чи палли «Таня» поэмă (1942 ç., апрель). Ку вăл - лирикăллă поэмă. Унта вырăс халăх хĕрĕн Зоя Космодемьянская комсомолкăн ĕмĕр манăçа тухми паттăр ĕçне кăтартса панă. Совет хĕрĕн петĕм тĕнчене тĕлĕнтернĕ хăюлăхĕпе паттăрлăхне поэт совет халăхне тивĕçлĕ патриотизмăн, героизмăн, çирĕплĕхĕн уйрăлми пайĕ пек сăнласа

кăтартать. Ку вăл пур енчен те тĕрĕс: совет халăхĕ - çавăн пек паттăр халăх, вăл вăрçăра та, мирлĕ ĕçре те шик-ленми кĕрешет.

Вăрçă вăхăтĕнчех, 1941 - 1942 çулсенче, Зоя Космодемьянская çинчен П. Лидов очерк çырнăччĕ, унтан вырăс поэтесси Маргарита Алигер «Зоя» ятлă поэмă çырчĕ, каярахпа тĕрĕксен паллă поэчĕ Назым Хикмет комсомолкă-герой ĕçне мухтакан поэмă пичетлесе кăларчĕ (ку поэмă та «Зоя» ятлă; ăна чăвашла та куçарнă). Вырăс, тĕрĕк, чăваш поэчĕсен произведенийĕсен геройĕ - Зоя Космодемьянская: ун сăнарĕнче тăшмана парăнман халăх ĕçĕсем курăнаççĕ. Поэмăсене кашни поэт хăй майлă çырнă. Чăваш поэчĕ вырăс хĕрĕн паттăрлăхне хăй пек кăтартса панă, хăй пек мухтанă.

«Таня» поэмăн пуçламăшĕнче Хусанкай халăх юмах-халапĕччен илнĕ тĕслĕхсемпе усă курать. Унта вăл, ĕлĕк-авал Вупăрпа Хĕвел хушшинче пынă вăрçă çинчен çырса, вулакана малтанах пĕр çирĕп шухăш парать: Совет çĕр-шывне хирĕç фашистла Германи пуçланă вăрçă вăл - Тĕттĕмпе Çутă хушшинчи, Вупăрпа Хĕвел хушшинчи вăрçă. Аслă вăрçăра вырăс хĕрĕ Зоя çутă Хĕвел хĕрĕ пулса кĕрешет. Хĕвелпи хăйĕн амăшĕнчен тӳсĕмлĕхпе п-аттăрлăх ыйтать:

> «Эс аннем те ман, эс аттем те ман,
> Ыо Хĕвелĕмçĕм çуттинче тытан!
> Тӳсĕм пар мана хурлăха чăтма,
> Ан кулайтăрччĕ курайман тăшман...»

Хĕвелпи ĕмĕчĕ, халăх ĕмĕчĕ, çакăн пек: Тĕттĕм пĕтмеллех, Хĕвел çĕнмеллех! Совет халăхĕ, унăн çарĕ фашистла Германие тĕп турĕ. Эпир каллех çутă пурнăçпа пурăнма тытăнтăмăр. Пирĕн умра - Хĕвел! Анчах капитализм тĕнчи - Теттĕмлĕх - çаплах-ха Çутта хирĕç тапаçланать: им-

периализмла реакци, вăрçă вутне чĕртсе яма, кайран вара халăхсене ирсĕр тĕттĕм ăшне путарма ĕмĕтленсе, тем те пĕр хăтланать.

«Таня» поэмă вулакансене сыхă тăма, паттăр пулма, ирсĕр тăшмана хирĕç тара типĕ тытма, кĕрешĕве хатĕр тăма чĕнет. «Таня» позмă - чуна хумхантаракан таса шухăшлă произведени. Ăна автор чун-чĕререн тăрăшса, хăйĕн юратнă ĕçне пысăк вăй хурса çырнă. Çавăнпа та вулакансем «Таня» поэмăна юратаççĕ, пысăка хурса хаклаççĕ.

Совет халăхĕн вăрçă вăхăтĕнчи паттăрлăхĕ - фронтри тата тылри паттăрлăхĕ, вăрçă хыççăнхи ĕçĕ-хĕлĕ Хусанкая çĕнĕ произведенисем çырма хавхалантарнă. Ĕçчен поэт темиçе çул хушши «Аптраман тавраш» ятлă поэмă çырчĕ (ку поэмăн пĕрремĕш кĕнеки 1946 çулта пичетленсе тухнăччĕ).

Поэмăра пĕр чăваш йăхĕн - Аптрамансен паттăр йăхĕн - темиçе ĕмĕрти пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне кăтартса панă. Поэмăн пуçламăшĕнче вулакансем чăваш колхозникĕ Аптраман Энтрийĕ вырăс рабочийĕпе Виктор Басовпа салтакра туслă пурăннине кураççĕ. Вĕсем фронтра пĕр-пĕрне пулăшаççĕ, амансан та, тем пек йывăр пулсан та, пĕр-пĕрне пăрахмаççĕ. Вĕсене пĕр шухăш хавхалантарать: Тăван çĕршыв - анне, ăна тăшмансенчен сыхламалла; Тăван çĕршыв пулмасан - ирĕк ;çыннăн пурнăçĕ те, чысĕ те пулма пултарай маст ь.

Тăван çĕршыв чысне ирсĕр тăшмансенчен хĕç-пăшалпа сыхлас йăла пирĕн çĕршывра ăруран ăрăва пынă. Российăри ытти халăхсемпе пĕрле чăвашсем те тĕрлĕ тăшмансене хирĕç сахал мар кĕрешнĕ. Çакă вăл Аптрамансен пурнăçĕнчен те лайăх курăнать. Энтрин мăн аслашшĕ Униçĕм салтакра çирĕм пилĕк çул çӳренĕ. Униçĕм несĕлĕнчен темиçе салтак тухнă, вĕсем те вăрçăсенче нумай юн тăкнă:

Тĕрĕкпе те вăрçма тивнĕ,
Яппунпа та вĕсене.

Энтри ашшĕ хăй те виçнĕ
Польшăн, нимĕçсен çĕрне.

Энтри ашшĕ, Илле хресчен, граждан вăрçинче пулнă, революци çĕнтерĕвĕсене хӳтĕленĕ. Совет саманинчен пуçласа Аптраман тавраш çĕнĕ пурнăçпа пурăнма тытăннă. Ĕлĕк Аптраман йăхĕнчи салтаксем хăйсем мĕншĕн вăрçăсенче çӳренине ăнланса илеймен, халĕ вĕсем хăйсем кĕрешсе илнĕ, тĕреклетнĕ çĕнĕ пурнăçа, совет çĕршывне хӳтĕлеççĕ. Халĕ Совет Союзĕнчи халăхсем пĕр туслă йышра пурăнаççĕ, вĕсен ĕмĕчĕ, тĕллевĕ - Тăван çĕршыва пуянран та пуян, тĕреклĕрен те тĕреклĕ тăвасси, коммунизм туса çитересси.

П. Хусанкай пултарулăхĕнче халăхсен туслăхĕн идейи витĕр курăнса тăрать. Халăхсен туслăхне поэт темиçе произведенире тĕрлĕ майпа каласа парать. Акă, тĕслĕхрен, 1930 çулта çырнă «Малаллăх маршĕ» çакăн пек йĕркесемпе пуçланать:

Чăваш-и, вырăс-и, тутар-и,
Мĕн пурĕ пĕр çăлтăр айне!

«Аслă çулпа» ятлă сăвăра (1950) поэт чăвашпа вырăс халăхĕсен туслăхĕ ĕмĕртен ĕмĕре чăмăртанса пыни çинчен çырать:

Ак тăвата çĕр çул аслă халăх
Хӳтĕлет пире хăй шăллĕ пек.
Кĕрешӳ, çĕнтерӳ, терт, хаваслăх -
Пурте унăн пĕрле пирĕнпе.

...Сывă пултăр çĕнелнĕ Российă!
Аслă туслăхăн çурчĕ - Мускав!

Варкӑшайтӑр Чӑваш ҫӗрӗ ҫийӗн
Пур йӑхне пӗрлештернӗ ялав!

П. Хусанкай хӑйӗн «Тӑван ҫӗршыв» ятлӑ поэминче (1950), Совет Союзӗнче тӑван халӑхсене, республикӑсене ырӑ кӑмӑлпа хисеплесе, юратса, совет халӑхӗсен туслӑхӗ ҫултан ҫул тӗрекленсе, илемленсе пынине кӑтартса парать.

Ҫак патриотла савӑсемпе поэмӑсем - пурте тенӗ пекех гражданла сӑвӑсемпе поэмӑсем: пӗрисенче мӗнле те пулин факта истори енчен ҫутатса ҫырнӑ, теприсенче хальхи пурнӑҫри факта илнӗ те йӗрӗ ҫухаличчен тенӗ пек, ҫийӗнчех ҫырнӑ. Сӑмахран, 1930 ҫулта Хусанкай «Итле, Германи!» ятлӑ сӑвӑ ҫырнӑччӗ. Унта вӑл Германин Мускаври посольстви Чӑвашпа Монголи Республикисен представителӗсене, вӑрҫа хирӗҫ пыракансен конференцине кайма визӑ памасӑр, Германие пыма чарнине питленӗ.

Германи - Генрих Гейне ҫӗрӗ-шывӗ,
Пӗлтер мана: илӗмсӗр туйӑнчим
Чӑвашпала монголӑн хӗрӗ-ывӑлӗ?
...Ҫӗр чӑмӑрӗ икке пайланнӑ чух
Ҫак ҫылӑхна аса илӗн эс, Германи.
«Каҫару ҫук сана, каҫару ҫук!» -
Тесе тӗнче тӑрӑх ылхав янӑранӗ.

Ку сӑвва ҫырнӑранпа 26 ҫул иртнӗ хыҫҫӑн та камсем монголпа чӑваш представителӗсене визӑ паманнине ӗҫ ҫыннисем манмаҫҫӗ: Германи империалисчӗсем тӗнчери халӑхсене пӗр-пӗринчен сивӗтме, пӗр-пӗринпе хирӗҫтерме, вӑрҫтарма тӑрӑшнӑ. Халӗ ҫӗр чӑмӑрне икке пайлакан чикӗ Германире выртать: Генрих Гейне Германийӗ

прогресшăн, демократишĕн, социализмшăн, анчах унта, çав чиккĕн леш енче, тепĕр Германи пур, - унта вăрçă хатĕрлекенсем тар пичкисем хушшинче вутпа выляççĕ.

Хусанкай - поэзи ăсти, унăн чĕлхе çӳпçи тарăн, сăмахĕсем чĕлхе вĕçне килсех тăраççĕ. Акă вулăр-ха халăхсен туслăхне мухтакан «Сăпка юррине»:

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Урупа ан тапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Çывăр, Аптраман тавраш!
.. Вырăспа та тăванлаш,
Тутарпа та эс туслаш,
Пурте - пирĕн хурăнташ,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Малалла утсан - малаш,
Каялла юлсан - каяш,
Чăн çултан эс ан аташ.
Çывăр, Аптраман тавраш!

П. Хусанкай, чăваш халăхĕ ытти мĕн пур халăхсемпе яланах туслă пурăннине, унăн нихăш халăхпа та ютшăнмашкăн нимле сăлтав та çуккине асра тытса, халăхсен туслăхне хӳхĕм ялава мухтанă пек мухтать:

Кам пулсан та - сухаçă, шахтер е салтак,

Украинец, чăваш, армянин-и -
Манăн чыс та, мухтав та малтан вăл ак çак:
Эп - Советлă Союз гражданинĕ!

П. Хусанкай чĕлхе тути-масине лайăх туять, сăвă виçине çирĕп тытса пырать: вăл хăш-пĕр поэтсем пек сăввăн тĕрлĕ виçисем хушшинче «çĕтсе каймасть», сăввăн силлабикă виçипе те, тоникă виçипе те ăнăçлă усă курать; вăл А. С. Пушкинăн произведенийĕсене те аслă поэт хăй мĕнле виçепе çырнă, чăвашла та çав виçепех куçарать; В. Маяковский, А. Твардовский, Н. Тихонов сăввисене те çавăн пекех куçарса парать. А. С. Пушкин произведенийĕсене куçарнă чухне пирĕн поэт пĕр паха шухăша асра тытса ĕçлет: Пушкинăн ытарайми илемлĕ сăвви чăвашла вулаканшăн та, вырăс çыннине илтĕннĕ пекех, лайăх янăраса илтĕнтĕр, аслă поэтăн гениллĕ шухăш-кăмăлĕ чăваш халăхне те тăван сăмах пекех çывăх пултăр.

П. Хусанкай вырăсларан А. С. Пушкинăн «Евгений Онегин» сăвăллă романне, «Полтава» поэмине тата ытти произведенийĕсене ăнăçлă куçарнă, çавăн пекех А. Грибоедовăн «Ăса пула инкек» комедине, В. В. Маяковскин «В. И. Ленин» поэмине те лайăх куçарнă. Çакă вăл чăваш чĕлхин пуянлăхне палăртнисĕр пуçне поэтăн талантне те уççăнах кăтартса парать. Чăваш чĕлхи - калаçу чĕлхи кăна мар, чăваш чĕлхи - поэзи чĕлхи те, наукă чĕлхи те. Вăл - чăннипех те хăватлă илемлĕ чĕлхе!

П. Хусанкай чĕлхе, сăмах вăйĕ çинчен «Чĕре юрри» поэмăра, кĕскен çеç пулин те, çакăн пек каланăччĕ:

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Эп пĕлеп: сăмахпа этеме
Амантма та пулать, ўкерме те,
Ўкнине те пулать çĕклеме...

Хусанкай хăш чухне хăйĕн сăввисене те тӳрех вырăсла çырать. Тепĕр чухне хăйĕн сăввисене хăех куçарать. Хусанкай «Нарспи» поэмăна, Çеçпĕл Мишши, С. Элкер, Н. Шелепи, Я. Ухсай тата ыттисен сăввисене вырăсла ку-çарнă. Ку вăл Çеçпĕл Мишши традицийĕ: вăл чăвашла та, вырăсла та ăста çырнă, ыттисене те çавăн пек ĕçлеме вĕрентнĕ.

П. Хусанхайăн уйрăм кĕнекисене вырăсла куçарнă. Вĕсем - «Дружба» (1950), «Поют дубравы» (1953), «Дом в Горках» (1955). Унăн произведенийĕсене, вырăсла кăларнисĕр пуçне, украинă, тутар, латыш, грузин, пушкăрт, мари, мадьяр чĕлхисене куçарнă.

Маларахра эпир Хусанкай сăвăсем çырма К. В. Ивановран вĕреннĕ, терĕмĕр. Тĕрĕсрех калас-тăк, вăл тата Çеçпĕл Мишшинчен те вĕреннĕ, халĕ те çав паллă поэтсенчен вĕренет. Хусанкай пирĕн поэзире К. Ивановăн, Çеçпĕл Мишшин паха традицийĕсене пуянлатса малалла илсе пырать. Хăшĕсем вăл «Çеçпĕл шкулĕн» çул-йĕрне «малалла аталантарать» (е аталантаракансенчен пĕри), теççĕ. «Чăваш поэзийĕнче нумай вăхăт хушши пынă тавлашура Çеç-пĕлĕн тоникăлла шкулĕ çĕнтерчĕ-çĕнтерчех», тет П. Хусанкай» хăйĕн пĕр статйинче («Ялав», 8-мĕш №, 1954 ç.). «Çеçпĕл шкулĕ» е «тоникăллă шкул» тени тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и (сăмах май вулакана çакна асăрхаттарар: чăваш ха-лăх поэзийĕнче тоникăллă виçе пуррине В. Сбоев XIX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенчех кăтартса панă), - эпир кунта ун пирки каласшăн мар. Эпир çакна çеç палăртасшăн: чăваш поэзийĕнче тонккăллă сăввăн виçи аталанса пыни пысăк та прогрессивлă ĕç, вăл пирĕн поэзин пуласлăхĕ мĕн тери пысăккине кăтартса парать. Анчах чăваш поэзишĕн халĕ силлабикă виçи те, тоникă виçи те пĕр пекех тăван, пĕр пекех хаклă: чăвашла икĕ виçипе те чаплă произведенисем çырма пулать. Ĕç яланах ăсталăхран, поэта хавхалантарса тăракан шухăшсенчен килет. Хусанкая

илес пулсан, вăл икĕ виçипе те çăмăл çырать, - поэзи кĕслин уççипе ăста усă курать.

П. Хусанкай - чун-чĕрине литературăна парса ĕçлекен поэт-лирик. Юлашки вăхăтра вăл тарăн шухăшлă, философиллĕ сăвăсем чылай çырчĕ. Ку сăвăсенче те унăн ăсталăхĕ лайăх палăрса тăрать. Хусанкай пултарулăхĕн ӳсĕмĕсем социализмлă реализм вăйне кăтартса параççĕ. Социализмлă реализм меслечĕпе ĕçлесе пирĕн литературă çӳллĕ шая çĕкленчĕ, вăй-хăват илчĕ, тĕрекленчĕ.

П. Хусанкая чăваш ĕç çыннисем юратаççĕ, хисеплеççĕ. Вĕсем унăн нумай-нумай юрри-сăввисенче хайсен шухăш-кăмăлне тупаççĕ. Вĕсем, халăх поэчĕ малашне тата та паха произведенисем çырасса, парти çул-йĕрне çирĕп тытса пырасса чун-чĕререн шанса тăраççĕ, ăнăçлă ĕçлеме ăна ырлăх-сывлăх сунаççе.

Поэт хăйĕн вăй-халне шанса, пуласлăха ĕненсе ĕçлет. Тăван халăха вăл çакăн-пек сăмах панă:

Акапуçĕ тытса хăпаланнă
Аллăма пĕтĕм халăх çинче
Парти хĕç пек перо шанса панă,
Эп пăрахмăп ăна виличчен...

*1957 çулхи январь*

## Поэзи пулсан...

### (П. Хусанкайăн «Тилли юррисем» тата «Кун-çул тӳпинчсн» кĕнекисенс вуланă май килнĕ шухăшсем)

Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн юлашки вăхăтра (1961 -1962 çç.) пичетленсе тухнă икĕ кĕнеки пăхма питех те печĕккĕ, анчах, пĕчĕкçĕ пулин те, паха кĕнекесем шутне кĕреççĕ. Пĕр кĕнекине, «Тилли юррисене», поэт 1933 - 1940 çулсенче, теприне, «Кун-çул тӳпинчен» ятлине, 1953 - 1957 çулсенче çырнă.

Эпир хамăр статьяна, хронологи йĕркине асра тытса, пĕрремĕш кĕнекерен пуçлатпăр. Çав вăхтрах, 1933 - 1940 çулсем хыççăн поэтăн шухăшĕсемпе ăнланăвĕсем чылай çӳллĕ тусăма çĕкленнине шута илсе, «Тилли юррисем» çине иккĕмĕш кĕнеке «тӳпинчен» пăхатпăр. Эстетикă ыйтăвĕсене тĕпе хурса пăхсан, иккĕмĕш кĕнеке тӳпи - вăл «Поэзи пулсан...» сăвă. Унпа юнашар тăраканни - «Кун-çул тӳпинчен» ятлă сăвă. Иккĕшĕ те тарăн шухăшлă, илемлĕ произведенисем.

...«Тилли юррисене» вулатăн та савăнса çапла калатăн: ку юрăсенче - тăван халăх юрри-сăввисен тахçантанпа пухăнса пынă илемĕ, халăх кăмăлĕ, ăс-хакăлĕ, чăваш поэзийĕн хăйне евĕрлĕхĕ, вăйĕ, поэт ăсталăхĕ, тетĕн, вара ку каланă сăмахсене çирĕплетсе пама, сăлтавлама, ăнлантарма тытăнатăн. Чăваш халăх юррисем - паян е ĕнер пуçланса кайнă юрăсем мар. Вĕсем халăхпа пĕрле, унăн пултарулăхĕ ӳснĕ май çуралнă. Тахçанхи самантсене мар, историллĕ ĕмĕрсене илсе пăхсан, çакă курăнать: чăваш çынни уя суха тума, тырă акма кайнă-и, улăха утă çулма-и, вăрмана йывăç касма-и, вăл, йывăр ĕçне çăмăллатас тесе, юрă юрланă; ĕç хыççăн, пушă вăхăтсенче, тăванĕсемпе, юлташ-тусĕсемпе уявсенче, ĕçкĕ-çикĕсенче пулнă-и, - ку чухне те хăйĕн юратнă юррисене юрланă. Чăваш хĕрарăмĕсем, ĕçре арçынсенчен юлмасăр (тепĕр чухне ирттерсе те) ĕçленĕскерсем, уявсенче те «шăпчăк чĕпписем пек шăппăн» ларман, - юрланă та ташланă. Чăваш хĕр-упраçĕсем тата хĕллехи улахсенче мĕн тĕслĕ юрă юрламан-ши? Ку çеç те мар-ха. Вĕсем тата мĕнле юрăсем çĕнĕрен хывман-ши? Шăпăрçăсемпе кĕслеçĕсем мĕнле кĕвĕ, мĕнле çемĕ шутласа кăларман-ши?.. Халăх юррисем сыпăкран сыпăка, ĕмĕртен ĕмĕре куçса, якалса, илемленсе пынă, пирĕн вăхăта çитнĕ.

Çав юрăсем тăрăх халăх шухăш-кăмăлне, ăс-хакăлне пĕлме пулать. Вĕсем халăх тĕнчене, пурнăçа, ĕçпе кĕрешĕве, малашлăха, туслăха, юлташлăха, хитрепе усала мĕнле ăнланнине кăтартса параççĕ.

«Тилли юррисем» кĕнеке умсăмахĕнче Илпек Микулайĕ: «Юрă вăл халăх чĕринчи куçа курăнми хăват», тет. Юрăсенче, чăннипех те, куçа-курăнми хăват пур. Акă, чăвашсем кĕпер хывма тухнă, тейĕпĕр. Сăвай çапаççĕ. Пурте ывăнса çитнĕ. Сăвай юррине юрлаççĕ те, вĕсен вăйĕ «хутшăнать», - хул кăкĕсем, ал тупанĕсем ыратни те сисĕнмест! Кам пулăшрĕ-ха сăвайçăсене? Мĕнле хăват? Юрă юррăн куçа курăнми хăвачĕ!

Çарсем, похода-мĕне кайсан, инçе çула юрăпа кĕскетнĕ. Юрă сăрт-ту, шыв-шур урлă каçма вăй панă. Салтаксен урисене çăмăллатнă. Юрă хаяр çапăçусенче тăшмана çĕнтерме пулăшнă...

«Тилли юррисене» вуласан, куç умне чăваш чĕлхин хăвачĕ тухса тăрать. И. Я. Яковлев чăваш халăхĕ «хăй чĕлхинче çĕр пин сăмах усрать» тенĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ халăх юррисемпе çуралнă, халăх юррисенче пурăнаççĕ.

Чăваш сăмахлăхĕн йышĕнче «философсем» пуçарса янă сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсем те пайтах. («Философсем» тенĕрен, çакна хăш-пĕрисем вĕçкĕн шухăш вырăнне хума та пăхрĕç. «Философсем» тесе кунта халăх ăслăлăхне пуянлатнă çынсене калатпăр. Философсем пек ăслă çынсем пирки сăмах пырать пулин те, çакна палăртас килет: халăх ăслăлăхĕ, паллах, наукăпа пĕр тан пулма пултараймасть). Йĕркеллĕ ашшĕ-амăшĕ çуратнă йĕркеллĕ чăваш нихçан та ăсран тайлăк пулман: çавăн пек чăвашсем пурнăçпа тĕнче тытăмне тавçăрса илме, шухăш шухăшлама, тепĕр чухне тавлашма та, хирĕç тавăрса калама та, тăшмана сăмахпа çапса хуçма та пултарнă. (Чăваш «философĕсен» ăслăлăхĕсене ку вăхăта çитсе те пухса йĕркелекенсем тупăнмарĕç-ха, чăваш халăх философине тĕпчесе çыракансем те курăнмаççĕ-ха).

«Тилли юррисем» çинчен сăмах пуçласа янă май тата çакна каламалла: чăваш халăх пултарулăхĕ юра-сăвăсемпе питех те пуян.

Вĕсенче куҫа пăвакан илем те, тарăн шухăш та пур. Анчах вĕсене тупма, ҫырса илсе, чун-чĕре, ăс-хакăл витĕр кăларма пĕлес пулать. Ҫыраканăн чĕри хавшак, ăсĕ кĕтĕк пулсан, вăл ырăпа усала уйăрса илеймест пулсан, - ун пек юрăсене вăл тупаймасть, илемне туйса илеймест. Юрлаканĕ те, ҫырса илекенĕ те Тилли пек пулмалла, ҫавăн чухне тин юрăсен вăйĕ, илеме, кĕрнекĕ упранса юлĕ, халăх патне тепĕр хут ҫитĕ.

«Тилли старик», - тет Илпак Микулайĕ кĕнеке умсăмахĕнче, - вăл Петĕр Хусанкайăн мăн аслашшĕ. Хусанкай ҫуралса ӳснĕ Сиктĕрме таврашĕнче Тилли старик юррисене ват ҫынсем халь те пулин нумайăшĕ ас тăваççĕ, ачисене, мăнукĕсене юрла-юрла параççĕ... Юрăсене Петер Хусанкай май килнĕ чухлĕ илемлетнĕ пуль, тĕллĕн-паллăн хушнă та пуль... Сăвăç ҫав юрăсене ĕнчĕ суйланă пек халăхран пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа илет те вĕсене поэзи янравлă майĕпе шĕкĕлчесе таван халăха каялла тавăрса парать», тет.

Илпек сăмахĕсемпе килĕшĕпĕр те тата ҫакна асăрхаттарăпăр: «Тилли юррисенче» - поэт ăсталăхĕ, вĕсенче - чăн-чăн поэзи. Ҫакна каланă май эпир вулакансене Хусанкайăн «Кун-ҫул тӳпинчен» ятлă кĕнекинче пичетленнĕ «Поэзи пулсан...» сăввине аса илтересшĕн:

Поэзи пулсан - ăш хыпса ҫуннă чух
Выртса ĕҫмелли шыв пек пултăр;
Кашни сăвăпа, савнипе чунпа чун
Калаҫнă пекех, кăмăл тултăр.

Поэзи пулсан - ĕҫлесе ывăнса
Сӳсленнĕ ӳте паттăрлаттăр;
Хула-ҫурăма мунчара ҫăвăнса
Тасатнăн, ҫынна вăл тасаттăр.

Поэзи пулсан - тӳшекпе-минтерпе
Выртса каçхине эс вулуçăн
Çĕклетĕр сана хăйвĕçен кавир пек,
Çил çеç вăркăшса вĕртĕр уççăн.

Поэзи пулсан - журналсем ун анне
Хĕссе лартиччен вăл пĕр тапхăр
Пĕçерттĕр наборщик аллин тупанне,
Чунна çĕнĕ çулăм хыптартăр.

Поэзи пулсан - вăл мантартăр ĕçке;
Сăвва сыпкăмшар ас тивсессĕн,
Калатăр этем: «Ку тата тутлă-çке!
Çакна тахçанах ман ĕçес-мĕн».

Куратăр-и, поэзи пулсан - вăл мĕн тери хăватлă вăй пулмалла! Тĕнчери аслă поэтсен пултарулăхне, вĕсем поэзи çинчен вĕрентнине илсе пăхсан, эпир çакна куратпăр: вĕсем поэзи хăйĕн хăватне пула пурăнни, манăçа тухманни, халăха пулăшни çинчен каланă. Ахальтен мар ĕнтĕ А. С. Пушкин хăйĕн юлашки сăввисенчен пĕринче халăх унăн ырă туйăмĕсене лирăпа хускатса вăратнăшăн ăна манмасса шанса çырнă («И долго буду тем любезен я на-роду, что чувства добрые я лирой пробуждал» тенĕ вăл).

Поэзи пирки каланă шухăша вĕçлес тесе, Хусанкай сăввинчен тепĕр йĕрке илĕпĕр:

Поэзи - шырав, кĕрешӳ, ăмăрту,
Ача йăл кулли, гени тарĕ,
Им-çам, юрату, кӳлешӳ, аркату,

Тĕнчемĕр нуши, пархатарĕ.

«Тилли юррисене», «поэзи пулсан...» тесе пăхсан - эпир ним иккĕленмесĕрех: вĕсем чăн-чăн поэзи шайĕнче тăраççĕ теме пултаратпăр. 1933 - 1940 çулсенче çырнăскерсем вĕсем чăваш поэзийĕн паха тĕслĕхĕсем шутне кĕреççĕ, поэтăн таланчĕ тăван халăх ăс-хакăлĕпе, чун-чĕрипе çывăх-ран та çывăх тăнине кăтартса параççĕ.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, Тилли чăвашра пурăннă, нумай сăвă-юрă хывнă, вĕсене халăх хушшине хăварнă. Ĕненетпĕр. Анчах халĕ вăл тахçан пурăннă çын мар, вăл ĕнтĕ поэт пултарулăхне пула литературăри сăнар пулса тăчĕ, тепĕр хут пурăнма тытăнчĕ. Елĕкхи Тилли - çын, Тилли - юрăçă çуралнă, пурăннă, вилнĕ пулсан, Тилли - сăнар вилмĕ, яланах чăвашсемпе пурăнĕ. «Тилли юррисене» урăх чĕлхесене куçарсан, вĕсем вырăссем, тутарсем... патне çитĕç. Тилли пурăнĕ! Чăваш юррисенче, ăслă сăмахĕсенче пурăнĕ, çĕнĕ ăрусене иртнĕ; саманасем çинчен каласа çÿрĕ, чăваш халăх пултарулăхĕн, поэзийĕн, чĕлхин вăйĕ çинчен систерсе тăрĕ, чĕресене, ăссене хускатса пурăнĕ.

«Тилли юррисем» кĕнекери юрăсене юрлакан уйрăм çын чăваш хушшинче чăнах та пулнă-и е пулман-и, поэт вĕсене Тиллирен çырса илнĕ-и е çырса илмен-и, çапах та, вĕсем - халăх юррисем çеç мар, поэт произведенийĕсем те, вĕсенче, татах калăпăр, Хусанкай ăсталăхĕ, пултарулă-хĕ, таланчĕ сисĕнет.

Эппин, Хусанкайăн çак кĕнекери ăсталăхне палăртас тесе, «Тилли юррисене», вĕсене юрланă çын сăнарне кĕскен те пулин пăхса тухар-ха.

Чăнах -та, мĕнлерех-ха Тилли сăнарĕ? Мĕнлерех-ха унăн юррисем?

Статья пуçламăшĕнче эпĕр чăваш «философийĕ» пирки ахальтен каламарăмăр: чăваш халăх ăс-тăнĕнче ĕлĕкех философла шухăшсем пулнă, çав шухăшсене каласа пама халăх хăш-пĕр сăмахсемпе терминсене те шухăшласа кăларнă (аслă шкулсенче вĕреннĕ, академисенче ĕçленĕ çынсем пулманни тата çав «философи» чăн-чăн

наукă çӳллĕшĕ, «философи тăвĕ» тӳпине хăпарса çитейменни халăхăн философла шухăш пулманнине пачах та пĕлтермест).

Акă, илер-ха «Тилли юррисем» кĕнекери «Мехел тени мĕн тени?» сăввах. Вăл чăннипех те философилле сăвă: унта, çут тĕнчен тĕрлĕ пулăмĕсене (явленийĕсене) илсе, автор философийĕн пĕр ăнланăвĕн тупсăмне уçса панă, ăнлантарнă.

Мехел тени мĕскер тени пулать?
Ыйтсамăр çумăр пĕлĕчĕсенчен:
Мĕн-ма вĕсем кăвак уярпала
Юхаççĕ çăвăнмасăр тахçанччен?
Мехел çитмен.

Мĕн-ши вăл «мехел»? Мĕне пĕлтерет-ши?

Н. И. Ашмарин профессор «мехел» сăмаха çапларах ăнлантарать: «Мехел çитмесĕр (вăхăт çитмесĕр) ăçта каян? теççĕ». Тепĕр тĕслĕх: «Тĕнченĕн мехелĕ çапла куран: пĕри пĕтнĕ çĕре тепри пулса тăрать» (вырăсла: «ко времени пибели одного возникаетдругое»).

Хăш-пĕр сăмах çаврăнăвĕнче «мехел» вырăнне çак сăмахсем вырăнлă пулма пултараççĕ: май (возможность), вăхăт (время), вăй (сила), пултару (способность). «Мехел» сăмаха философла шухăшлакан çын шухăшласа кă-ларнă пулмалла. Хусанкай сăввине вулакан çын, чăваш философине тĕпчесе вĕренекен çын пулас пулсан, мĕн тери савăннă пулĕччĕ, савăннипе: - Эврика! Шыранине тупрăм, тупрăм! Хисеплĕх пахалăха хуçнине кăтартакан тĕслĕх... - тесе кăшкăрса янă пулĕччĕ (чăвашла кирлĕ таран ăнланайман вырăссене мар, философие университетра вĕреннĕ чăвашсене «хисеплĕх пахалăха куçни» мĕне пĕлтернине вырăсла куçарса парăпăр: вăл «переход количества в ка-чество» тенине пĕлтерет! К. Маркс çапла калать: «...Чисто

количественные изменения на известной ступени переходят в качественные различия».

Эппин, çумăр пĕлĕчĕсен мехелĕ çитет-и - çитмест-и? Çитет. Мĕнле çитет? Акă çулла. Ăшă кун. Кăвак тӳпене пĕлĕтсем тухма тытăнаççĕ. Тачкаланса, хулăнланса пыраççĕ вĕсем. Çапах çумăр çумасть-ха.

Тăрсан-тăрсан пĕтĕм тӳпене хулăн пĕлĕтсем карса илеççĕ. Пĕрисем иртме те ĕлкĕреймеççĕ - çавăнтах теорисем капланса килеççĕ. Çапах çумăрĕ çук-ха. Тумламсем шĕпĕр-шепĕр çеç ӳккелеççĕ...

Акă хайхи тĕксĕм пĕлĕтсем кăвак тӳпене хупласа хураççĕ. Акă çиçĕм çиçрĕ, аслати те кĕрĕслеттерчĕ. Çумăр халĕ чĕреслетсе çăвать... Мĕншĕн тесен мехелĕ çитрĕ: пухăнса, пухăнса пынă çумăр «чăтаймарĕ, тӳсеймерĕ» - çуса ячĕ! Çакă вăл, пирĕн шутпа, диалектикă законĕпе пыракан йĕрке - унта хисеплĕх пахалăха куçать (акă хайхи философа савăнтаракан тĕслĕх!)

Çав сăвăранах тепĕр тĕслĕх илер:

Мехел тени мĕскер тени иккен?
Ыйтсамăр пахчари улмуççирен:
Ма ун çеçки, чăмăртансах çитсен,
Тепре çĕр каçатех çурăличчен?
Мехел çитмен.

Ашă çуркунне. Пахча тулли улмуççи. Кашниех, пан улми çитĕнтерсе, çĕнĕ йывăç ӳстересшĕн. Çеçхисем чăмăртанса тухаççĕ, анчах вĕсем çурăлман-ха, уçăлса каяйман-ха... Халь-халь куçĕсем уçăлас пек, чечек сăнĕ, илемĕ курăнас пек силленсе тăраççĕ. Çапах та мехелĕ çитмен те - вĕсем чечексем мар-ха, папкасем, çеçкесем çеç-ха. Акă, хайхискер, мехел, патнех-патнех çывхарчĕ, çитрĕ - виссе те юлаймарăмăр, чечек

сиксе тухрĕ, анасларĕ те сарăлса кайрĕ. Ку вăл диалектикă законех: хисеплĕх пахалăха куçни! Çапла, тĕрĕс çырать поэтăмăр:

Мехел çитсессĕн çумăр ярăнать,
Çунатлă чун çӳлтен çĕре анать,
Чечек папки илемлĕн çурăлать,
Йĕркипелен юрри те юрланать -
Мехел çитсен.

Шутланă-ши Тилли старик унăн юрри-сăввисем, халăх хушшинче сарăлса, якалса, илемленсе пырса, мехел çитсен, поэзи ахахĕ пулса тăрасса? Тилли юррисенче философла шухăшсем тăтăшах тĕл пулаççĕ, çапах та вăл хăйне философ тесе шутламан (вăл, паллах, философ тесе кама каланине те пĕлмен): унăн юррисенче тем чухлĕ илем, çапах та вăл хăйне поэзи ăсти вырăнне шутламан. Юрăçă старик пурăннă пурнăçра асапне те, хĕнне те пайтах курнă, тар юхтарнă, куççуль тăкнă, - юрлама пăрăхман: пĕтĕм ĕмĕрне юрласа ирттернĕ, çавăнпа унăн юррисем халăх чĕринче юлнă, шухăшĕсем халăх ăс-тăнне кĕнĕ. Юрăра ун яланах мехел çитсе пынă.

Юрăсене вуласан, малтан Тиллин ача чухнехи сăнарĕ курăнса каять. Мĕнлерех-ха вăл? Тиллисем пиллĕкĕн пĕр тăван. Тилли чи кĕçĕнни, ăру асси. Пирĕн Тилли ултă уйăхра ураланнă, тăххăралла чĕлхе кăларнă. Çуралма вăл, малтанах каламаллаччĕ, чышкă чăмăртаса, тĕпекпеле çуралнă. Тĕпекне амăшĕ çӳпçе тĕпне пытарнă.

Тилли ача чухнехи вăхăта, иртнĕ кунсене аса илсе юрлать:

Унпа пĕрле пытарнă вăл юрра,
Çавна тупса эп халь кĕвве хурап.

Сĕвем çумне сĕвем тиреп сăмах,
Пĕр сăмаххи - мерчен, тепри - ахах.

Шăрçа пек юрă ярăмĕ вара
Пĕр сыпăксăр юхать çавра-çавра.

Эпир, малалла, тепĕр ик сăвă вулатпăр та пирĕн ума вун улттăри Тилли чупса тухать. Çитĕнсех пырать вăл, юрă хыççăн юрă юрлать, юррисенче тăванĕсене асăнать. Камсем-ха унăн тăванĕсем? Мĕнле çынсем?

Шурăмпуçсем килеççĕ шуралса,
Ват асаннем ларать пуç тураса,
Шурăмпуçран та шурă сурпанне
Тирпейлĕн сырăнать ыр асанне.

Вут çутипе вылять пĕр чӳрече,
Анне çӳрет тĕпелĕн кукринче:
Вăл чашкăрта пуçланă çатмана,
Юсман шăрши кĕрет ман сăмсана.

Чĕрик туса илет кĕçĕн хапха,
Тин уявран кĕрет иккен аппа...
Инке тăрса тухать шур кĕлетрен,
Шăлт-шалт кĕвентелет ик шуç витре.

Çапла, вун улттăри Тиллин асламăшпе аслашшĕ, ашшĕ, амăшĕ, инкĕшĕ, аппăшĕ, йăмăкĕ пур. Вĕоен пурнăçĕ - чăваш пурнăçĕ, вĕсен йăлисем - чăваш йăлисем.

Тилли асламăшĕ «шурăмпуçран та шурă сурпанпа», инкĕшĕ «шур кĕлетре» çывăрать, «шап-шур чĕр çиттипе» çӳрет.

Шурăмпуçран та шурă сурпана, шап-шурă чĕр çиттипе кунта «нациллĕ колорит» палли теме пулĕ («колорит» пирки эпир маларахра калăпăр-ха). Пирĕн шутпа, çак шурă япаласем - чаваш халăхĕ тирпейлĕ, таса пурăннине кăтартакан тĕслĕх. Тилли юррисенче час-часах «шурă» тени ăнсăртран персе янă сăмах мар, чăваш пурнăçне палăртакан паллăсенчен пĕри.

Тилли çитĕнсех пырать, каччă пулса çитет. Унăн тăват касра тăвату савни, тăваттăшĕ те мерчен тухъяпа, анчах хăрхăм тăвас хĕрсем мар, хĕве хупмалли - пĕри кăна.

Тиллин ĕнтĕ мăшăрланас шухăш та пур. Урампа утса пыруçăн вăл кăвак куçлă тухъя пуçа курать, кăвак куç кăчăк туртса чĕнсе илет. Каччă хĕр патне кĕрет, симĕс атă кунчине çитмĕл пуслăх (хальхи шутпа - 20 пуслăх) кĕмĕл ярать, шӳт туса аттине хывтарать, кĕмĕл укçа урайне тухса ӳкет. Кăвах куç, çакна курсан, кулкаласа: «Туй кĕлечĕ мар-çке...», тет.

Çаксенчен чăвашсен иртнĕ саманари йăлисем курăнаççĕ. Вĕсем чăваш халăхĕн авалхи пурнăçне кăтартса параççĕ. Паллах, йăласене ĕмĕрлĕхех хытса ларнă, çĕнĕ кунсем витмен, улăштарайман япала вырăнне хума çук. Вĕсем ул-шăнсах пыраççĕ. Хальхи чăваш хĕрĕсемшĕн пулсан, шупăрсем, тухъясем, симĕс атă кунчине янă кĕмĕлсем тата ытти те ниме те пĕлтермеççĕ. Анчах çав тумсемпе йăласем иртнĕ вăхăтри пурнăçра пулнă, çавăнпа та Тилли юррисем пек произведенисенче тĕл пулма пултараççĕ те, вырăнлă та.

...Ĕç çыннисем ыйхăран ир вăранаççĕ, ир тăма юратаççĕ. Тилли асламăшăпе аслашшĕ те, амăшĕпе ашшĕ те çавах - вĕсем шурăмпуç çутипе вăранаççĕ. Пĕррехинче Тилли амăшепе ашшĕ ирех, автансем

шарлатса авăтма тытăннă чух, тăнă та тем пирки сăмах вакласа лараççĕ. Тилли итлесе выртать:

Мăнтарăнсем, ăш ыйхине татса,
Канаш тăваççĕ иккĕш ерипен:
«Хăш ывăла парар-ши салтака?
Май çук пĕрне памасăр пиллĕкрен».

Пилĕк ывăлтан кĕçĕннине салтака пама калаçса татăлаççĕ стариксем, мĕншĕн тесен: чи аслине парас - ачи нумай; иккĕмĕшне парас - мăшăрĕ усал; вăталăххи çуртра - ăсли самай; ун хыççăнхи - кăçал çеç авланнă...

Тилли, куççульне аран-аран тытса чарса, çав вăхăтрах хăйне евĕрлĕ шӳтлĕрех сăмахпа калать:

«Нихçан та манăн шурăмпуçпелен
Вăранас мар-мĕн тутлă ыйăхран!»

Çакăн хыççăн Тилли юррисенче кăштах хуйхăллă кĕвĕсем илтĕнме тытăнаççĕ: вăл тĕмеске тăпри çинчен те шухăшласа илет. Çапах та, Тилли ялтан, халăхран юлмасть: халăхра çӳрет, туйран туя çӳрет, ĕçкĕ-çикĕре пулать.

Кашни юрăрах Тиллин характерĕ уçăлса пырать, сăнарĕ ытларах курăнать. Ашшĕне вăл арăсланпа танлаштарать, амăшне ăмăрт кайăкпа, пиччĕшне - пĕрхĕтпе, инкĕшне - илĕртӳллĕ хĕрарăмпа, аппăшне - акăшпа, йăмăкне - йăпăртанпа.

Тилли хай кам пек-ши? Унăн сăнарĕ мĕнлерех-ши? Салтак çулне çитнĕ Тилли хай çинчен акă мĕн калать:

Хурчăкапа тан хам пур:
Кунĕн-çĕрĕн юр юрларăм,
Пĕр туйран та эп юлмарăм,
Чуп туман хĕр хăвармарăм.

Çак строфа тăрăх, Тилли хурчка пек тейĕпĕр, вал çивĕч куçлă, пултаруллă çын пулни курăнать. Хурчка пек çынсем ниçта та аяла пулмаççĕ. Анчах Тилли хурчкапа тан пулсан, пирĕн шутпа, «кунĕн-çĕрĕн юр юрларăм» тени кунта килĕшуллĕ мар. Хурчка... юрă юрлать! Тен, вăл сăнĕпе чăнах та хурчка пек, тен, унăн кăмăлĕ, характерĕе пачах урăхла. Çапах та, пĕтĕм ĕмĕрне юрласа ирттернĕ, халăх хушшине илемлĕ юрăсем хăварнă çынна урăхларах кайăкпа танлаштарас килет.

Тилли юрлать, юрлать те ашшĕпе амашĕ тата хай çинчен тепĕр хыпар пĕлтерет:  вăл - тĕне кĕнĕ чăваш.

Аттеçĕм ман Хусанăн хуçи мар,
Аннеçĕм   Питĕрпурăн пики мар,
Эп хам Тилли, пуп хунă ят Çерук,
Ман пек  такмакçă таврара тек çук!

Çав вахăтрах эпир Тиллисен кил-йышĕ катăлнине пĕлетпĕр: аслашшĕпе асламăшĕ Тилли туйĕнче пулаймаççĕ, - вĕсем ачин ачи туйĕнчен, поэт сăмахĕпе калас-тăк, «тĕнĕсĕр пӳрт» туяннă, пĕри юман юпа айне, тепри çăка юпа айне выртнă. Тилли, халăх йăлине тытса, аслашшĕпе асламăшне: çăмăл пултăр нӳр тăпра, тесс асăнать, пелил ыйтса тулли курка тăкать.

Тилли тавра курăмĕ малалла тата та анлăланать, сарăлать. Ку таранччен Тилли-Çерук кил-йыш, çемье хуйхи-суйхи çинчен юрлатчĕ, халĕ ĕнтĕ вăл халăх хуйхи-суйхи çинчен те юрлать. Урăхла пулма та пултарайман, мĕншĕн тесен вăл таçта, темле утрав çинче, пурăнакан

çын мар, Тилли халăхпа пĕрле пурăнать. Унăн юррисене поэтăмăр вăхăта, саманана, халăх пурнăçне асра тытса, туйса çырнă.

Куртăмăр ĕнтĕ, Тилли Хусана асăнать, Питĕрпур çинчен калать. Ун юррисенче Атăл, Шур Атăл. Çарăмсан тĕл пулать. Сиктĕрмене асăнса юрлани те пур. Çаксем Тилли ăçталла пурăннине, мĕнле самана çынни пулнине кăтартса параççĕ. Çĕршывра патша пуррине те пĕлет Тилли. Вăл халăх тамашипе нуши çинчен юрлать. Юрри вара, юрри - тĕлĕнмелле юрă:

Хăпартăм çӳллĕ ту çине;
Çаврантăм пăхрăм ял енне;
Ялти ватсем-мĕн хупахра.
Алси-калпакĕ саклатра.
Пуш кĕленчи умĕсенче,
Сенкер черкки аллисенче,
Чĕлĕмсем шăл хушшинче,
Тĕтĕмĕсем урайĕнче.
Пурак тĕпне шаккаççĕ те
Черкки çине пăхаççĕ-çке:
Ĕçмеллисем - пĕрре сыпма,
Туртмаллисем - пĕр сывлама.
Ан хуйхăрăр, ватсем, сĕре,
Тавăрăрах енчĕкĕре.
Калатăп эп, Тилли, сире:
Ним кӳмесессĕн те пире,
Патша эрех кӳрех тăрĕ,
Табак кимми килех тăрĕ.

Çак йĕрксем художник ӳкернĕ картинă пек. Ӳкерчĕк çинче çӳллĕ ту; унта Тилли тăрать. Аялта ял. Ялта хупах. Тĕрлĕ хĕн-хур тамаша пусарнипе хĕсĕнсе-пĕсĕнсе пурăнакан чăвашсем хупаха пухăннă. Хуйхи-

суйхине эрехпе сӳнтерме шут тытнӑ. Анчах эрехне мӗнпе илмелле-ха? Тен, вӗсен пур-ҫук укҫине тахҫанах патша чиновиикӗсем сӑптӑрса кайнӑ? Тен, ҫав ватӑсен тата та хырҫӑ-марҫӑ тӳлемелле? Халӗ вӗсем пушӑ енчӗкӗсене тавӑрса пӑхаҫҫӗ, хуйха ӳкеҫҫӗ: мӗнле пурӑнмалла-ха пурнӑҫа?..

Тилли чӑваш ялӗн социаллӑ нуши-тамашине тӗрӗс ӑнланать, патша политикине те чухлать. Патша халӑх нушине эрех ӑшне путарма, эрех ӑшне путарса хысна таврашне пуйтарма шутланӑ, ялсенче, ҫав шутра чӑваш ялӗсенче те, хупахсем уҫса тултарнӑ (сӑмах май Ҫӗмӗрле районӗнчи ялсенч-ен пӗри халӗ те-ха «Хупахушкӑнь» тенӗ ятпа пурӑнать. Ҫакӑ вӑл патша правительствин шалти политикине кӑтартакан паллӑсенчен пӗри пулмасан, мӗн пултӑр-ха).

Тилли хайне пысӑка та, ӑсла та хумасть. Вӑл - патша кӳрсех тӑракан табак киммине пушатса пурӑнакан чӗлӗмҫӗсенчен пӗри, енчӗкре укҫа тытайман кӗлмӗҫӗ (кӗлмӗҫрен те кӗлмӗҫӗ!). Вӑл тӗнчери кӗлмӗҫсене пӗрре курнипех ӑнланать, хӑй камне те каласа парать:

Эй, эсир, чӗлӗмҫӗсем,
Тӗнчери кӗлӗмҫӗсем!
Хам та эпӗ чӗлемҫӗ,
Тен, сиртен те кӗлӗмҫӗ...

Кӗлӗмҫӗ пурнӑҫ ҫинчен, тӗнче ҫинчен шухӑшлать, шухӑшлать те:

Шӑнкӑрах та шӑнкӑр шӑнкӑрав,
Мӗскер тесе шӑнкӑртатать-ши? -

тесе ыйтать Тилли. Ҫавӑнтах вӑл тупсӑмне те пӗлтерет:

Итлеп, итлетӗп те ӑнкарап
Тӗлӗнтерет тӗнче тамаши!

Малтан, çамрăкрах чух, Тиллн кил-çуртри япаласем çинчен, тăванěсем çинчен юрлатчě, унтан ял, çěршыв çинчен юрларě, халě ěнтě вăл тěнче çинчен юрлама тытăнчě.

Тилли кун-çул пирки шухăшлать те куккукран: «Миçе çул эп пурăнмалла?» тесе ыйтать. Хăех вара, нумай пурăнма ěмěтленсе, ответне тупать: «Тем чул, тем чул...» Хаваслă ěмěт ун чěринче юрă хыççăн юрă çуратать, ăна хуйхă пусса илеймест. «Мěн пур хуйха-суйха пуçра тытсан, тухма пулать иккен тăр ухмаха» - тесе йăпатать вăл хайне хăй.

Эппин, шав та тăвар, кěр те тăвар,
Ěçер-çиер, тăван, выляр, кулар!
Никам та ик ěмěр пурăнман,
Никам та çук тěнчене тытакан.

Ку йěркесенче хаваслăх, оптимизм вěресе тăрать. Тилли халăх йалипе хăй миçе çул пурăнасса куккукран ыйтанçи пулать, çав вăхăтрах куккука ěненмест, хăйне çеç шанать, куккука ěненес пулсан та, вăл çакна аван чухлать; тěнчере никам та икě ěмěр пурăнса курман, икě ěмěр пурăнма май пулсан, «ырă улпутсем» нихçан та вилměччěç, халăха пусмăрласа пурăнěччěç те пурăнěччěç...

Çын, ватăлнă май, улшăнса пырать: пěри ăс пухма чарăнмасть, мěн виличченех чипер ăспа пурăнать, ун пеккисем çинчен чăвашсем: «ват çын - тăват çын», теççě; тепри, ăсран тухса, сӳтěлсе каять, унăн «кěнеки çěтелнě», теççě халăхра. Тилли чăннипех те «тăват çын». Вăл ватлăхра та çут тěнче тытăмě пирхи шухăшлама пăрахмасть. Ăна кăвак тӳпен хěррипе варри, тěпě пурри-çукки, çěр, хěвел, уйăх, çăлтăрсем мěнле пулса кайни, хура тăпра, сар хăйăр, чул муклашки тата ытти те интереслентерет. Анчах çут тěнче пирки шухăшласа пуçне çěмěрнě чухне те унăн шухăшěсем социаллă ыйтусем патне çаврăнса тухаççě. Акă вăл, çěрпе, хăйăрпа, чул катăкěпе «калаçма» пултара-канскер, хурал

пӳртне хурланса кӗрет те, кантур таврӑшӗсене куланай чакарттарас тесе йӑлӑнса, урайне выртнӑ хура халӑха тата ӑна тӗрлӗ хырӑҫ-марӑҫшӑн хӗнеме илсе килнӗ пӗр купа ҫӗмӗрт хулли курсан, йывӑр шухӑша кайса, хӑйӗнчен хӑй ыйтать:

Тӗнче тытан чӑнах пур пулсан,
Курать-ши вӑл ҫакна куҫӗпе?
Епле-ха ҫын, ҫыннах парӑнса,
Ҫак мӑшкӑла чӗмсӗр тӳсеп эп?

Ҫамрӑкрах чухне юрланӑ юрӑсенче Тилли турра-пӳлӗхе, турӑ ҫырнине асӑнать, халӗ вӑл «турра шансан, турат ҫине тӑрӑнан» тет; ӑна халӗ пуп та, мулла та кирлӗ мар, вӑл «ан сун мана эс, пуп, леш тӗнчесем» тет.

Тилли старике, иртнӗ ӗмӗрти чӑваш ҫыннине, хресчене, ӗлӗкхи саманаран тӑпӑлтарса илсе, хальхи ҫын пек сӑнласа катартнӑ пулсан, поэт тӗрӗс мар тунӑ пулӗччӗ. Вун тӑххӑрмӗш ӗмӗр ҫынни - вун тӑххӑрмӗш ӗмӗр ҫынниех пулмалла: Тилли - ҫав ӗмӗрте пурӑннӑ чӑвашсен сӑнарӗ, поэт ӑна ӑста кӑтартса панӑ, ӑна вӑл халӑх ӑс-хакӑлӗн, шухӑш-кӑмӑлӗн ҫуттипе ҫутатса кӑтартнӑ. Тили - ҫирӗп сывлӑхлӑ, ҫирӗп шухӑшлӑ, ырӑ ӗмӗтлӗ чӑваш хресченӗ, унӑн шухӑш-кӑмӑлне халӑх шухӑш-кӑмӑлӗ йӗркеленӗ. Тиллин сӑнӗ те, ӑсӗ те пур, чи кирли - унӑн тӳсӗмлӗх пур, тӳсӗмлӗхе пула вӑл «вилме маннӑ» ватӑ ҫулне ҫитиччен пурӑнать, ҫапах та чӑваш ятне ҫӗртмест.

Тилли сӑнне катартса парас тесе, поэт ӑна куҫ кӗски ҫине пӑхтарать. Тилли, хайӗн сӑнне курсан, иртнӗ пурнӑҫне аса илсе, хӑй мӗн тери ватӑлнине каласа парать:

...Ас тумарӑм, тантӑшам, туймарӑм:
Нар пек хӗрлӗ питӗм пӗтӗмпех
Пӗркеленнӗ кайнӑ пӗлӗм пек. ...
Пӑрҫа лавӗ евӗр ҫӳҫӗмпе

Кукшаланнă юлнă йĕтем пек...

Тилли юррисенчен тата çакă курăнать: Тилли çамрăк чухне шăлĕпе тулли пăтавкка çыртса йăтнă, çĕнĕ сӳс тăлла çыртса татнă; унăн куçĕ-пуçĕ тĕлĕнмелле пулнă, лашине виç çухрăмран паллană, тинкерсессĕн - йывăçа хăртнă, кăнтăрла çăлтăр курнă (ку тĕлĕшпе вăл чăнахах та «хурчкапа тан» пулнă).

Юлашкинчен, Тиллин элчел çинчен хунă юррине вуласан, кăштах чун хурланать: çын çуралать, çуралсан - пурăнать, пурăнать те, ĕçлет, ĕçлет те, вăхăчĕ çитсен - куçĕ хупăнать, тетĕн. Анчах эпир кăмăлсăр çынсем мар, пирĕн пĕрле ӳснĕ, пĕрле пурăннă, ĕçленĕ тус-тантăшсем, ырă юлташсем пур, ял-йыш, хула-йыш пур; вĕсем пĕр-пĕрне тĕл пулсан, пĕр çĕре пухăнсан - пире ырă сăмахпа асăнĕç, тетĕн... Çак шухăш çĕклет камăла, хурланса вилме памасть. Пурăнатăн та шухăшлатăн: пурăнан - пурăнас пулать пултаруллă та илемлĕ! Этем пурăнăçĕ яланах çутă пултăр. Çутти тĕттĕме çутаттăр, çынсен чĕрисене ăшăттăр. Кун пек çынсен сăнарĕ пирĕн литературăра пур ĕнтĕ. Вĕсем йывăрлăхсенчен те, тăшмансенчен те хăраман. Вĕсем аптраман, юрласа пурăннă, - юрлама вара Тилли пек юрланă.

* * *

«Тилли юррисенче» пурте вырăнлă: вĕсен содержанийĕ те, форми те оригиналлă, хитре, пĕр-пĕринпе ним уйрăлми çыхăнса, пĕр-пĕрне витĕр витсе тăраççĕ. Вĕсем пĕтĕмпех халăхăн, çав вăхăтрах - поэтăн, Хусанкайăн; вĕсенче халăх пултарулăхĕпе поэт пултарулăхĕ пĕр çĕре пĕтĕçсе, тĕвĕленсе, пĕрлĕх пулса тăраççĕ, пĕр-пĕрне вăй параççĕ. Анчах кам та кам: поэта хăйĕн пултарулăхпе халăх пултарулăхĕпе пĕрлештерме çăмăл, тет, - вăл йăнăшать, мĕншĕн тесен халăх сăмахлăхне, халăх пултарулăхне çавăн пек (Тилли юррисем пек!) чĕртсе яма, чун кĕртме, çунат пама пысăк талантлă поэт çеç пултарать.

«Тилли юррисенче» Хусанкай чăваш халăх поэзийĕн паха формисене чĕртсе янă, чун парса çĕнĕ шая çĕкленĕ. Вĕсем çĕнĕлле янраççĕ, чăваш поэзин формисем пуян та пиçĕ пулнине тепĕр хут кăтартса параççĕ. Вĕсенче чăваш сăввин виçи çеç мар, чăваш литературин нациллĕ формин элеменчĕсем те яр-уççăн курăнаççĕ. Эпир чĕлхе çинчен: вăл - илемлĕ произведенин пĕрремĕш элеменчĕ, тетпĕр, анчах вăл нациллĕ формăн хăйне евĕрлĕхне унăн ытти пал-лисемпе пĕрле çеç кăтартса парать. Литературă произведенийĕн форми - вăл питех те кăткăс япала, унта наци чĕлхин сăмахĕсен сăнарлă йĕрки те, калаçăвăн ритм йĕрки те, произведение çырнă чухне автор ăсталанă сюжетпа композици те кĕрет. Кусемсĕр пуçне нациллĕ формăна фольклорăн, халăх пултарулăхĕн, нациллĕ литературин традицийĕсем те кĕреççĕ.

Чăваш поэзийĕн формисем пирки В. Сбоев хăйĕн «Исследования об инородцах Казанской губернии» ятлă кĕнекинче (1856 ç.), чăваш фольклорĕнчен илнĕ сакăр юрра тĕпчесе тухса, çакăн пек çырнă: «Юлашкинчен, çакна асăрхаттарни кирлĕ тесе шутлатăп: чăваш сăввин тытă-мĕ - тоникăллă тытăм. Чăвашла сăвă çырас йĕркен пĕрремĕш условийĕ тата унăн никĕсĕ - вăл логикăллă ударенисем, тепри - сăмахсен вылявĕпе аллитераци; чăваш сăввинче аллитераци - пирĕн сăвăсенчи рифмă вырăнĕнче; анчах рифмă чăваш сăвви йĕркин вĕçĕнче мар, малта е варринче пулать...»

Рифмăсене çавнашкал йĕркепе тунине, сăмахран, эпир М. Ф. Федоровăн «Арçури» халапĕнче куратпăр. Унта аллитераципе ассонансăн паха тĕслĕхĕсене тупма пулать*.

П. Хусанкай «Тилли юррисенче» аллитераципе питех те ăста усă курнă. Унăн сăввисен хăш-пĕр йĕркисем янăравлă рифмăпа пуçланаççĕ, янăравлă рифмăпа пĕтеççĕ, теприсенче - рифмăсем йĕрке варринче.

Акă, хорей виçипе çырнă, малта рифмăланакан юнашар рифмăллă сăвă:

Хапха умне тайăлтăм,
Хапăл курки эп ĕçрĕм.

Кил картине тайăлтăм,
Килĕшу курки ĕçрĕм.

Пăлтăр умне тайăлтăм,
Пăлчав курки эп ĕçрĕм.

Пӳрте кĕтĕм, тайăлтăм,
Пӳрнĕ курка эп ĕçрĕм.

Сак халăхне тайăлтăм,
Савăш курки эп ĕçрĕм.

Такмакларăм, тайăлтăм,
Тав куркине эп ĕçрĕм.

Кĕрекене тайăлтăм,
Кĕрӳ курки эп ĕçрĕм.

Юр юрларăм, тайăлтăм,
Юрлав курки эп ĕçрĕм.

Таш ташларăм, тайăлтăм,
Тăрлав курки эп ĕçрĕм.

Çулăх çултăм, тайăлтăм,
Çул куркине эп ĕçрĕм.

Ку юрăра, ăна васкарах вуласа тухсан, нимех те çук пек туйăнма пултарать. Пăхăсăн - вăл тĕлĕнмелле илемлĕ, янравлă юрă. Пăхăсăн -унта тем тĕрлĕ рифмă. Пăхăсăн - унта чăваш поэзийĕн колоричĕ.

«Колорит» тенĕрен, çакна асăрхаттарас килет: колорит тени, поэт халăх пурнăçне, йалисене, ăс-тăнне пĕлет пулсан, вăл хăех тупăнать, ун пек поэт, «колорит» тупас тесе, хыпса-çунса çӳремест. Колорит вăл поэт пултарулăхне нациллĕ тĕс парать, унăн произведенийĕсен содержаиине те, формине те ытти халăх поэчĕсен произведенийĕсен содержанийĕпе форминчен уйăрса илме май парать. Колорит тенине нациллĕ поэтăн пултарулăхĕнчен, сăвви-юрринчен уйрăм илсе пăхма çук, вăл поэт пултарулăхĕн содержанийĕпе форминче - этем кĕлеткинчи ӳтпе юн пекех; вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрни - этемĕн ӳт-тирне каса-каса пăрахса, юнне юхтарнă пекех. Нациллĕ колорит -■ вăл нациллĕ литературăн, искусствăн сăн-сăпачĕ, илемĕ, ăш-чикки.

«Нациллĕ колорит» поэзие тем пекех кирлĕ. Сăвăсен илем, шухăш пулмалла. Урăхла пулсан, вĕсем çара çерçи пекех. Ун пек çерçи-сăвăсен илем мар, çара ӳт-тирне витмелĕх мамăкĕ те, тĕкĕ те çук.

Хусанкай сăвиисен хăйне евĕр рифмисене, вĕсен янравлăхне кăтартса парас тесе, тата пĕр-ик тĕслĕх илсе пăхар-ха. Акă малти тата кайри рифмăллă йĕркесем:

**Пилллĕкĕнех** эпир, ай, **пĕр тăван,**
**Пилĕкех** те пилеш пĕр **тымартан.**

Сăвă йĕркисен варринче тунă рифмăсене кăтартакан тĕслĕхсем (ун пек рифмăсене р е д и ф теççĕ):

Çуралнă **эп çурхи** чĕрлĕхпелен.
Кĕрленĕ **эп кĕрхи** кĕрлĕхпелен.

Е тата:

Авал пире - ах, **тур! -** тетчĕç,
Мур-шар тивми **маттур,** теетчĕç,
Шыва ӳксен, вута вăрăнсан
Сарăплами **сатур,** теетчĕç.

Çак тĕслĕхсем Хусанкайăн сăвă ăсталăхне, унăн талантне кăтартса параççĕ. Вăл кашни сăмаха, унăн янравлăхĕпе тупсăмне сăвăра туйса çырать, сăмахпа вырăнлă усă курма пĕлет. Унăн сăввисене чăвашсен тупмалли (сутмалли) юмахĕсем те, ваттисен сăмахĕсем те, каларĕшсем те лайăх кĕрсе вырнаçаççĕ.

Хусанкай юрри-сăввисенче ăсталăх, талант çиçсе тăрать.

Калама канас: ăсталăх!.. Ăсталăх туянас тесе, поэт мĕн тери тăрăшнă-ши, мĕн чухлĕ вăй пĕтернĕ-ши, тар юхтарнă-ши, ыйхă вĕçтернĕ-ши?.. Мĕн чухлĕ, мĕн чухлĕ?..

Калама канас: талант!.. Хусанкайăн ĕнтĕ талант тени çителĕклех: талант «валеçнĕ» чухне вăл, мĕштĕркки чăваш пек, çăпата сырса юлман. Пахи, пурне те савăнтараканни тата çакă: талантне вăл ĕçре упрать, ĕçре аталантарать.

...«Тилли юррисенчи» уйрăм вырăнсене хальхи çамрăк вулакансем, тен, тӳрех ăнланса та илеймĕç. Мĕншĕн тесен вĕсенче иртнĕ саманан эпир ĕнтĕ манса кайнă паллисем час-часах тĕл пулаççĕ. Хăш-пĕр çĕрте сăмахĕсем те хальхисем мар.

Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Ман пуçăмра сăсар çĕлĕкчĕ,
Çĕлĕкĕмĕн тӳпи - чăн тарай,
Чи тăрринчи çӳçи кĕмĕлччĕ, -

тесе юрлать Тилли. Мĕне пĕлтерет-ха «ĕлек чухне... ĕлĕкчĕ» тени? Вĕсем ниме пĕлтермен сăмахсем мар-ши? Н. И. Ашмарин словарĕнче «ĕлĕк чухне» сăмах çаврăнăшне çакăн пек пуплевпе çирĕплетсе панă: «Эпир ĕлĕк чухне ĕлĕкчĕ, çичĕ хĕл каçнă пăланччĕ» (IV вып., 100 стр.). Çавăнтах тата «ĕлкĕ» сăмах пур. Ку сăмах «тĕслĕх» (образец) тенине пĕлтерет; «ĕлĕк чухне эп хам ĕлекчĕ» тени ĕлĕк эпĕ маттурччĕ, çирĕпчĕ, вăйлăччĕ, илемлĕччĕ тенине пĕлтерет. Çавăнпа та Тилли çапла юрлама пултарнă:

Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Пăшатан пек куçлă йĕкĕтчĕ,
Кача пӳрнем тулли çĕрĕччĕ,
Кăчăк туртмассерен пĕр хĕрччĕ.

Ватăлма пуçланă Тилли хăйĕн йыттипе калаçать:

Ватăлатпăр пуль, Сарпайăм!
Санăн та куç хупанки
Тăртанса ĕнтĕ сархайнă,
Ман юратнă çум çакки!

Строфари юлашки йĕрке, инверси меслечĕпе пуплев вĕçне пырса вырнаçнăскер, мĕне пĕлтерет-ши? Мĕн-ши вăл «çум çакки»?

Ăна çапла ăнлантараççĕ: ĕлĕк чăвашсем аякка, хул хушшине, пĕчĕкçĕ хутаç çакса çӳренĕ. Çав хутаçа арçынсем укçа-тенкĕ, хĕрарăмсем йĕп-çип...чикнĕ. Н. И. Ашмарин профессор: «Çум çамки, то же, что çумма çакмалли, прицепка», тесе ăнлантарать (Словарь, **XII** оып., 234 стр.). Тилли хăйĕн йыттине, çывăх тусне, «çум çакки» вырăнне хурать.

Хусанкай «Тилли юррисенче» чăваш чĕлхин шкул грамматикинче тĕл пулсах кайман формисемпе те ăста усă курать (тĕслĕх: чăрманмасса, сăрхăнмасса).

Кĕнекери пĕр юрă çапла пуçланать:

Ни Киремет, ни Пӳлĕх, ни Хăрпан
Мана хăтараймарĕç ватлăхран.

Паллах, «ни... ни... ни» тенисем, чăвашсен калаçу чĕлхинче пур пулин те, пирĕн шутпа, Тиллишĕн характерлă пулма пултараймаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем чăваш чĕлхине кайрантарах кĕнĕ. Тилли вăхăтĕнчи çын: «Киремет те, Пӳлĕх те, Хăрпан та...» тенĕ пулĕччĕ.

Хусанкай сăввисем пирки тата та çырма пулать. Вĕсенче тăван чĕлхен илемĕ, вăйĕ, пуласлăхĕ пирки калана вырăнсем те сахал мар. Сăмахран, «Кун-çул тӳпинчен» кĕнекере чăваш чĕлхин малашлăхе поэта çакăн пек курăнать:

Пăхăрпала тăхлан пăтрашăнса
Илемлĕ, çирĕп бронзă пулнă пек
Çак хамăршăн ытарайми таса
Чĕлхемĕр те çухалмĕ пĕтĕмпех.

Ытти чĕлхесемпе пĕр хуранта

Вăл варăшĕ те пиçĕхĕ татах;
Юлашкинчен хытсах ларсассăн та,
Упранĕ, тен, тĕлĕнмелле сăмах.

Çак чĕлхенех вăйне пара-пара,
Поэт хăватлă шухăш хăварсан, -
Ун чапĕ кайĕ пĕтĕм çĕр тавра.
«Камран?» тесессĕн, калĕç: «Чăвашран!»

* * *

Эпир хамăр статьяна Хусанкайăн «Кун-çул тӳпинчен» ятлă кĕнекине асăнса пуçларăмăр, çапах та ытларах «Тилли юррисем» пирки сăмах вакларăмăр. Юлашкинчен те пулин, «Кун-çул тӳпинчен» кĕнеке çинчен калас пулсан, çакна палăртмалла: унта поэтăмăр паянхи пурнăç çине, иртнĕ самана, чăваш культурин хăш-пĕр çыннисемпе вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çине хальхи кунсен шайĕнчен, тӳпинчен пăхма тăрăшать. Хальхи пурнăç çинчен çырнă сăвăсем: «Ленин», «Ленин çулĕпе», «Ноябрĕн 7-мĕшĕ, «Эпĕ - халăх», «Ырă кăмăллă тус, сасă пар, алă пус!» «Çĕр юлташĕ çаврăнать», «Çамрăксем, малалла, çӳлелле!», «Суйлавçăсем умĕнче» тата ыттисем т.е. Сăвăсен тепĕр ушкăнĕнче автор наукăпа литературă ĕçĕнчи пултарăва (творчествăна) мухтаса çырать.

«Кун-çул тӳпинчен» кĕнекери сăвăсем те нумайăшĕ философла сăвăсем. Вĕсенчен чи лайăххисенчен пĕри тесе «Поэзи пулсан...» сăвва шутлас пулать. Ку сăвă пирĕншĕн «Тилли юррисене» виçмелли виçе пулчĕ. Çапла вара, эпир Хусанкайăн пĕрремĕш кĕнекине, малтанах каларăмăр ĕнтĕ, иккĕмĕш кĕнекин «çутипе», уйрăмах «Поэзи пулсан...» сăвă шухăшĕсем енчен пăхса тухрăмăр, çав çутăра унăн пахалăхне куртăмăр, хăш-пĕр çитменлĕхне те асăрхарăмăр.

«Кун-çул тӳпинчен» кӗнекере, шел пулин те, ӑнланма йывӑр вырӑнсем те пур. Сӑмахран, ун пек вырӑнсем «Пултару» сӑвӑра (1955 ç.) В. Г. Егоров профессора хисеплесе çырнӑскерсенче, тӗл пулаççӗ. Этем тӑвакан хаклӑ пурлӑх (илемпе чӑнлӑх) çинчен çырнӑ хыççӑн автор çакӑн пек калать:

Çав пурлӑха куллен  пухса
Хӑш чух çука тӑрса  юлатпӑр,
Хӑш чух никам çӑвар уçса
Сӑмах чӗнменнине куратпӑр.

Суя мухтав ярапине
Вӗлкӗштерен çил хӳрисемшӗн
Эс - пӗтнӗ çын ун пек чухне,
Сана вӗсем шыва тӗртесшӗн.

Çынсемшӗн темле те, пирӗн шутпа, ку йӗркесене тӗп-тӗрӗс ӑнланса илме çук.

«Çурри» ятлӑ сӑвӑра та (1957 ç.) ӑнланма йывӑр йӗркесем сиксе тухаççӗ.

Эх-хей! Тӗнчен саманисем те саккӑр,
Тамашисем те тӑххӑр, тенӗ  пек, -
Апла та вылянать, капла та тапхӑр,
Сасартӑках уйлаймӑн пӗтӗмпех.

Кунта «апла та, капла та» вылянакан тапхӑр тесе уйрӑм этеме турӑ вырӑнне хунӑ çулсене каланӑ пулсан, эпир ӑна çакӑн пек ӑнланатпӑр:

вăл ĕнтĕ пирĕн çĕршывшăн иртнĕ тапхăр! Сталина турă вырăнне хунă çулсем кая тăрса юлчĕç, урăх нихçан та таврăнаймĕç.

«Кун-çул тӳпинчен» кĕнеке, пĕтĕмĕшпе илсен, паха кĕнеке пулсан, «Тилли юррисем» кĕнеке, унăн юррисене уйрăм илсе пăхсан, кашниех интереслĕ те паха. «Тилли юррисем», тĕрĕссипе каласан, - юрăсем çеç мар, вĕсем хăйне евĕр лирикăллă пĕчĕкçĕ энциклопеди, хăйне евĕр поэмă. («Энцииклопеди» тенĕрен хăшĕ-пĕрисем шартах сикĕç. Ăнлантарăпăр вĕсене: «Тилли юррисем» «энциклопеди» пулсах çитмен пулсан, вĕсене «энциклопеди» тума пулатех!) Унта темиçе юрă, вĕсене уйрăмшарăн илсе пăхсан, пурте мар пулсан та, нумайăшĕ вĕçленсе çитернĕскерсем, пĕрле илсе пăхсан, пурте пĕр çын пурнăçĕ çинчен калаççĕ, çав вăхăтрах халăх ĕмĕт-шухăшне, ăнланăвĕсене кăтартса параççĕ.

«Тилли юррисем» - поээин хăйне евĕр жанрĕ, поэмăн хăйне евĕр форми тесен те йăнăш пулас çук. Çавăн пек формăпа Митта Васлейĕ «Тайăр» ятлă поэмă çырма тытăннăччĕ. Вăхăтсăр çĕре кĕнĕ пирки çырса пĕтерейменĕ. «Та-йăр», «Тилли» - пĕр енчен, питех те çăмăл, тепĕр енчен, çав тери йывăр формă. Çавна пула хăшĕ-пĕрисем ку формăн «çăмăллăхне» те, «йăвăрлăхне» те ăнлансах каймаççĕ. Тен, шăпах çавăн пирки пулĕ «Тайăр» произведение уйрăм юлташсем: «Ăçтан вăл поэмă пултăр? Вăл - Миттан хăй çинчен çырнă сăввисем... татăк-кĕсĕкĕсем...», терĕç. Çавăн пек критиксем «Тилли юррисем» пирки те: «Вĕсенче Хусанкай хăй çинчен çырнă» теме пултарĕç. Çапах та, ку юрăсем уйрăм йышши поэмă пулнине палăртмасăр иртме çук (тен, вĕсем поэмă пулса çитеймен пулĕ, çапах та вĕсене поэмă тума пулать). Вĕсенче герой сăнарĕ çеç мар, халăх сăн-сăпачĕ те курăнать. Ку вăл пĕрремĕш юрăран тытăнса юлашки юрра çитиччен курăнса тăрать.

«Тилли юррисенче» поэт ахаль сăмахпа, калаçупа, прозă чĕлхипе каласа пама çук шухăш-туйăмсене каласа панă. Этем ăс-тăнĕнче çавăн

пек шухăшсем, чĕринче çавăн пак туйăмсем пурри çинчен А. И. Герцен «Поврежденный» ятлă повеçре çапла çырнă: «Досадно, что я не пишу сти-хов... Стихами легко рассказывается именно то, чего не уловишь прозой... едва очерченная и замеченная форма, чуть слышный звук, не совсем пробужденное чувство, еще не мысль... в прозе просто совестно повторять этот лепет сердца и шепот фантазии».

«Кăшт çеç илтĕнекен, йăлтах хускалса çитеймен туйăм, пулса тăрайман шухăш...» - чăн-чăн поэтсем ĕнтĕ вĕсене каласа пама пултараççĕ, каласа параççĕ те. Çакă вăл «Тилли юррисенче» те аван курăнать.

...Пирĕн шутпа, «Тилли юррисен», ăна поэмă тесе шутлас пулсан, пĕр çитменлĕх палăрать. Тилли - хресчен, ĕç çынни... Эппин, ана ытларах ĕçре кăтартмалла пулнă. Халлĕхе вăл ытларах ĕçкĕрен ĕçке çӳренĕ пек курăнать.

Çĕршывра мĕнле ĕçсем пулса иртнĕ вăхăтра пурăннă вăл? Çав ĕçсенчен пĕрине те пулин, пысăкраххине, Тилли юрринче палăртма çук-ши? Тăван халăх, ял-йыш ун чухне мĕнпе ытларах тăрмашнă тата ыт. те.

Тилли старике чăвашсен асран кайми аки-сухи çинчен, утă-çаран, тыр-пул, çĕмел-капан çинчен, чăваш ялĕсене тăтăшах пыра-пыра çапнă выçлăх, «çĕр вăрçи», ял пусĕнчи «хура юпа», «хурăн çул»... çинчен юрлаттарас килет. Ан тив, вăл Чăваш Хвети, Янтуш тата ытти ятсăр нумай-нумай юрăçсен вĕçленмен сăвви-юррисене вĕçлесе, юрласа чунне лăплантартăр.

Тилли кĕрешӳ юррисене те юрлатăр. Чăвашсем кĕреçе, сенĕк, пуртă тытса ĕçлеме пĕлнипе пĕр вăхăтрах пуртă, кĕреçе, сенĕк йăтса кĕрешме те пĕлнĕ. Чăваш халăхĕ ытти халăхсем тăшманпа кĕрешнине пăхса çеç тăман, çук, пачах та ун пек мар: вăл хăй те ирсĕр тăшмансене хирĕç тухса кĕрешнĕ, ытти халăхсемпе пĕрле тăрса; пĕрле пырса кĕрешнĕ. Чăваш хресченĕсем Степан Разин, Емельян Пугачев хыççăн кайнă,

патшасен, улпутсен тарçи-тĕрçине тытса силленĕ, тăпăлтарнă, вĕлернĕ, пупсене вăрăм çӳçĕсенчен тытса чиркӳ тăрринчен пăрахнă.

Тилли сăнарĕ тата та кăмăллăрах, паттăртарах, типлăрах пултăр, халăх ăс-тăнне кĕтĕр, чăвашпа пурăнтăр, ĕçлетĕр, кĕрештĕр.

Çапла, пирĕн шутпа, «Тилли юррисен» ярăмне çĕнĕ юрăсем кĕртсе (анлăлатмалла, сармалла пек туйăнать, вара унăн шухăшĕ таранланĕ, пахалăхĕ тата та çĕкленĕ, ӳсĕ. Вара вăл чăннипех лирикăллă пĕчĕкçĕ энциклопеди пулса тăрĕ.

Тата çакна асăрхаттарас килет: кĕнекери хăш-пĕр юрăсене юрлама, çырма пуçланă çеç, çавăнпа та вĕсем, писательсен сăмахĕпе каласан, «заготовкăсем» пак кăна туйăнаççĕ. Акă вĕсенчен пĕри:

Кăмăлăрсем çемçе - кăпăк пекех,
Чĕлхĕр-çăварăрсем чĕкеç пекех.
Тав куркине ĕçрĕм эп тĕппи,
Çул куркине епле ĕçĕп-ши?

Ку юрă юрламалăх çук, пер çаврăм çеç. Юрăра сахалтан та виçĕ çаврăм пулмалла. Çав вăхăтрах юрă ютлашши вăрăм та пулмалла мар. Чăваш юрри çеçен хир пек сарлака мар, хирпе пыракан çул пек вăрăм мар.

«Тилли юррисене» хакласа, вĕсене поэт илемлетнине асра тытса, Илпек Микулайĕ «...вĕсем тăван халăхăн авалхи юррисене пур пĕрех çывăх тăраççĕ», тет. Пирĕн тата çапла хушса калас килет: вĕсем чăвашсен хальхи юррисене те çывăх тăраççĕ. Мĕнпе? Хăйсен хавасլăхĕпе, оптимизмĕпе. Тилли пек чăвашсем, пурнăç тем пек йывăр пулсан та, вилме маннă ватăсен çулне çитиччен пурăнма ĕмĕтленнĕ, «(пурăнар-ха пурнăça...» тесе юрланă. «Тилли юррисем» ĕмĕртен ĕмĕре куçса, илемленсе пынă пахалăхĕпе хальхи чăваш поэзине çывăх

тăраççĕ. Вĕсен виçи халăх юррисен çичĕ сыпăклă виçи çеç мар, хальхи поэтсем усă куракан сăвă виçи (ямб, хорей, анапест).

Статьяна пирĕн çакăн пек каласа пĕтерес килет: поэзи пулсан - вăл Тилли юррисем пек пултăр, унтан та вăйлă, илемлĕ пултăр. Çавăн пек поэзи тăван литературăна çĕнĕ те хаклă пурлăх хушать. Поэт калашле, чăнах та:

Çав пурлăха кĕве çимест,
Шăши касмасть, хыпмасть вут-çулăм.
Çав пурлăх муртăхмасть, çĕрмест,
Пĕтмест те, - вĕçĕмсĕр кун-çул ун.

*1962*